# Ҫӗнтерӳ ялавӗ

Муркаш район хаҫачӗ 1944 ҫулхи ҫу уйӑхӗн 5-мӗшӗнчепе тухать

79 (8646) № * Шӑматкун, 2018 ҫулхи юпа (октябрь) уйӑхӗн 20-мӗшӗ * Хакӗ ирӗклӗ

Сывлӑх

## Эпир сывӑ пурнӑҫ йӗркишӗн!

**Октябрӗн 19-мӗшӗнче Шупашкар хулинчи Мускав районӗнчи Атӑл хӗрри массӑллӑ спорт тренировкин лапамӗ пулса тӑнӑ. Кунта ҫав кун ирлесе Чӑваш Республикин ӗҫ тӑвакан влаҫ органӗсен тата муниципалитет йӗркеленӗвӗсен ертӳҫисем пухӑннӑ. Пӗрлехи тренировка ирттерсе вӗсем сывӑ пурнӑҫ йӗрки кулленхи пурнӑҫ норми пулса тӑма кирлине хӑйсен тӗслӗхӗпе кӑтартса панӑ.**

**Тренировкӑна Муркаш район администрацийӗн пуҫлӑхӗ Ростислав ТИМОФЕЕВ та хутшӑннӑ. Акӑ мӗн каласа панӑ вӑл район хаҫачӗн сотрудникне В. ШАПОШНИКОВА республика тӗп хулинчен таврӑннӑ хыҫҫӑн:**

– Влаҫ органӗсен тата муниципалитет йӗркеленӗвӗсен ертӳҫисемпе ирттернӗ асӑннӑ мероприяти пурне те питӗ кӑмӑла кайрӗ. Спорт тӗл пулӑвне хутшӑнакансене Чӑваш Республикин Пуҫлӑхӗ Михаил Игнатьев саламларӗ. Республика ертӳҫи хӑйӗн ӗҫ кунне шӑпах ӗнтӗ ирхи тренировкӑран тытӑннине лайӑх пӗлетӗп. Иркӳлӗм куллен кунта курма пулать ӑна.

Михаил Васильевич коллегӑсене сывӑ пурнӑҫ йӗркине пропагандӑлама хутшӑнма кӑмӑл тунӑшӑн тав сӑмахӗ каларӗ, кун пек тренировкӑсене ирттерессине йӑлана кӗртни сывлӑха сыхлама кӑна мар, кулленхи ӗҫ тухӑҫлӑхне те ӳстерме пулӑшассине каларӗ.

Районсемпе хуласен вырӑнти хӑй тытӑмлӑх органӗсен ертӳҫисем ҫав кун республика тӗп хулине Чӑваш Ен Пуҫлӑхӗ ирттерекен ӗҫ канашлӑвне тата республика Патшалӑх Канашӗн черетлӗ сессине хутшӑнма пухӑннӑччӗ. Пӗрле пухӑнса Атӑл хӗрринче тренировка ирттернӗ май, ку территорие юлашки вӑхӑтра епле тирпейлесе хӑт кӗртнипе те паллашма пултартӑмӑр. Массӑллӑ тренировка вӑхӑтӗнче велосипедпа тата роллер йӗлтӗрпе ярӑнакансем те, ҫуран чупакансем те, скандинави мелӗпе утакансем те пулчӗҫ. Эпӗ вара ҫуран чупса тренировкӑна хутшӑнтӑм.

Сӑмах май, кун пек спорт тренировкисене хамӑр районта ял тӑрӑхӗсен пуҫлӑхӗсемпе ирттерсе пӑхсан та ытлашши пулмӗ тесе шухӑшлатӑп.

Тыр-пул уявӗ иртрӗ

## Ӗҫӗ те, ӗҫченӗ те куҫ умӗнче



*Кӗр кунӗсем – хресчен ӗҫне пӗтӗмлетмелли вӑхӑт. Ӗнер Муркашра иртнӗ Тыр-пул уявӗнче пӗрлешӳллӗ кооперативсемпе хресчен (фермер) хуҫалӑхӗсенче, килти хушма хуҫалӑхра ял хуҫалӑх продукцийӗ туса илекенсем пӗрле пухӑнса пурнӑҫланӑ ӗҫсене пӗтӗмлетрӗҫ, умри тӗллевсене палӑртрӗҫ. Ҫӗр ӗҫчене вырӑнти культура ӗҫченӗсен савӑк юрри-кӗвvипе пӗрлех район пуҫлӑхӗпе И. Николаевпа район администрацийӗн пуҫлӑхӗ Р. Тимофеев, Чӑваш Республикин граждансла оборона тата чрезвычайлӑ лару-тӑру ыйтӑвӗсемпе ӗҫлекен патшалӑх комитечӗн ертӳҫи В. Петров, АПК ӗҫченӗсен профсоюз рескомӗн председателӗ А. Смирнов, муркашсен ентешлӗх ертӳҫи тата Чӑваш наци конгресӗн вице-президенчӗ В. Тяпкин саламларӗҫ.*

*Паянхи сӑн ӳкерчӗкре эсир ҫӗр ӗҫӗнчи тӑрӑшулӑхпа «Чӑваш Республикин ял хуҫалӑхӗн тава тивӗҫлӗ ӗҫченӗ» хисеплӗ ята тивӗҫнисене куратӑр. Вӗсем (сулахайран сылтӑмалла): Е. Андреев яч. хис. хуҫалӑхӗн тракторист-машинисчӗ Михаил Никодимович Атласкин тата «Ударник» хуҫалӑхри производство участокӗн пуҫлӑхӗ Геннадий Никонович Афанасьев.*

(Вӗҫӗ 5-мӗш стр.)

**ҪУЛ-ЙӖР ХУҪАЛӐХӖН ХИСЕПЛӖ ӖҪЧЕНӖСЕМ ТАТА ВЕТЕРАНӖСЕМ!**

Сире професси уявӗ ячӗпе чун-чӗререн саламлатӑп!

Ку чухнехи ҫул-йӗр тытӑмӗ чылай чухне ял-хула сӑн-сӑпатне йӗркелет, территорин инвестици илӗртӳлӗхӗ ҫине витӗм кӳрет. Ҫулсем мӗнлерех шайра пулнипе пассажирсемпе ҫуран ҫӳрекенсен тата водительсен хӑрушсӑрлӑхӗ тӳрремӗн сыхӑннӑ.

Чӑваш Енре ҫул-йӗр инфратытӑмне аталантарасси ҫине уйрӑмах тимлӗн пӑхаҫҫӗ. Ҫав тӗллевсем валли отрасле миллиардшар тенкӗлӗх инвестицисем явӑҫтараҫҫӗ. Юлашки икӗ ҫулта ҫул-йӗр хуҫалӑхне аталантарма 9,5 миллиард тенкӗ янӑ.

Регион территорийӗнче ҫул-йӗр строительствин пысӑк проекчӗсем пурнӑҫланаҫҫӗ. Федераци шайӗнчи, муниципалитетсем хушшинчи тата вырӑн пӗлтерӗшлӗ ҫулсем ҫулсерен ҫӗршер ҫухрӑм юсанса ҫӗнелеҫҫӗ, кӗперсемпе транспорт ункисем хута каяҫҫӗ, ҫуртсен картишӗсем тирпейленсе илемленеҫҫӗ. Республикӑра пурӑнакансем ҫав туса ирттернӗ ӗҫсене пысӑка хурса хаклаҫҫӗ.

Ҫул-йӗр отраслӗн ӗҫченӗсем ҫанталӑка пӑхмасӑр республикӑри ҫул-йӗр тытӑмне ҫулталӑк тӑршшӗпех йӗркеллӗн асӑрхаса тӑраҫҫӗ, унӑн хӑрушсӑрлӑхне тивӗҫтереҫҫӗ. Вӗсен ырми-канми ӗҫӗ ҫынсене савӑнӑҫ кӳрет, пурнӑҫне хӑтлӑрах тӑвать.

Хӑйсен опытне, пӗлӗвӗпе ӑсталӑхне ҫамрӑксене пиллекен ҫул-йӗр хуҫалӑхӗн ветеранӗсене уйрӑм тав сӑмахӗсемпе палӑртса хӑварас тетӗп.

Сире пурсӑра та пӗтӗм чунтан ҫирӗп сывлӑх, ырлӑхпа телей, Чӑваш Енпе Раҫҫей тата унта пурӑнакан кашни ҫын ырлӑхӗшӗн ҫӗнӗ тӗллевсене ӑнӑҫлӑн пурнӑҫлама сунатӑп!

**Чӑваш Республикин Пуҫлӑхӗ**
**М. ИГНАТЬЕВ.**

**ҪУЛ-ЙӖР ОТРАСЛӖНЧЕ ВӐЙ ХУРАКАНСЕМПЕ ҪАК ӖҪӖН ВЕТЕРАНӖСЕМ!**

Сире пурне те хӑвӑрӑн профессии уявӗпе чун-чӗререн саламлатпӑр.

Ҫӑннипех те пархатарлӑ ӗҫ тӑватӑр эсир. Ҫулсем тӑватӑр, юсатӑр, вӗсене кирлӗ шайра тытса тӑратӑр. Ҫул ҫинчи хӑрушсӑрлӑх шайӗ мӗнле пуласси сирӗнтен нумай килет. Тавах сире тӑрӑшуллӑ ӗҫшӗн, районӑн социаллӑ пурнӑҫӗпе экономика аталанӑвне пысӑк тӳпе хывнӑшӑн.

Юлашки ҫулсенче ҫулсем тӑвассипе тата юсассипе районта сахал мар ӗҫ туса ирттеретпӗр. Кӑҫал районти ҫул-йӗр фончӗ 47 млн. тенкӗпе танлашрӗ. Иккӗмӗш ҫул ӗнтӗ эпир «Хӑрушлӑхсӑр тата пахалӑхлӑ ҫул-йӗр» федераллӑ программӑна хутшӑнатпӑр. Унпа килӗшӳллӗн кӑҫал кӑна 4 объектра пурӗ 24 км ҫула юсарӑмӑр. Ҫакна валли пурӗ пирӗн районта 110 млн. тенкӗ укҫа уйӑрнӑ. Унсӑр пуҫне пуҫарулӑх бюджечӗн программипе ялсенче ҫул тӑвассипе 14 проект пурнӑҫа кӗчӗ. Ҫак ӗҫе ял ҫыннисем питӗ активлӑ хутшӑнчӗҫ. Вӗсене те ҫакӑншӑн тав тӑватпӑр.

Эсир малашне те хӑвӑрӑн ӗҫе кирлӗ пек пурнӑҫласса шанатпӑр. Районти ҫулсем пахалӑхлӑ шайра пулччӑр тесе малалла та пӗрлех тӑрӑшса ӗҫлесчӗ.

Сире пурне те ҫирӗп сывлӑх, телейлӗ вӑрӑм кун-ҫул сунатпӑр. Ӗҫӗсем малалла та ӑнсах пычччӑр. Ҫемьере юратупа килӗшӳ пултӑр.

**Район пуҫлӑхӗ – депутатсен район Пухӑвӗн председателӗ**
**И. НИКОЛАЕВ.**
**Район администрацийӗн пуҫлӑхӗ**
**Р. ТИМОФЕЕВ.**

Пӗрлехи информаци кунӗ

## Ыйтӑвӗсем кашнинех пырса тивеҫҫӗ

**Пӗрлехи черетлӗ информаци кунӗ пирӗн районта, пӗтӗм республикӑри пекех, октябрӗн 17-мӗшӗнче иртрӗ. Ял ҫыннисемпе, ӗҫ коллективӗсемпе тӗл пулса информаци кунӗн темисен шутне кӗртнӗ ыйтусемпе калаҫусем йӗркелеме, ҫынсене канӑҫ паман ыйтусене хуравлама района республика тӗп хулинчен Чӑваш Республикин граждансла оборона тата чрезвычайлӑ лару-тӑру ыйтӑвӗсемпе ӗҫлекен патшалӑх комитечӗн председателӗ Вениамин Петров ертсе пыракан ушкӑн килчӗ. Республика представителӗсем тата район администрацийӗн яваплӑ ӗҫченӗсем ертсе пыракан ушкӑнсем ҫав кун кашни ял тӑрӑхнех ҫитрӗҫ. Тӗл пулусенче республикӑра тата районта ҫул-йӗр ӗҫӗсене туса ирттересси, нумай хваттерлӗ ҫуртсене тӗпрен юсасси, кӗркуннехи тата хӗллехи тапхӑрта пушар тухасран асӑрханасси, грипран асӑрханассипе вакцинаци кампанине ирттерессипирки сӑмах пычӗ.**

Информаци ушкӑнӗн ертӳҫи Вениамин Петров ҫав кун район администрацийӗн пуҫлӑхӗпе Ростислав Тимофеевпа Катькас ял тӑрӑхне ҫитсе курчӗ, тӗл пулусене «Моргаушская» чӑх-чӗп фабрикинче, А.В. Терентьев предпринимателӗн каминсем тӑвакан цехӗнче вӑй хуракансемпе йӗркелерӗ. Тӗл пулусене Катькас ял тӑрӑхӗн пуҫлӑхӗ Геннадий Лебедев та хутшӑнчӗ.

Ӗҫ коллективӗсемпе тӗл пулнӑ май, Вениамин Иванович информаци кунӗн темисене анлӑн уҫса пачӗ. Пӑхса тухма кун йӗркине кӗртнӗ ыйтусем пурте кашнин кулленхи пурнӑҫӗпе ҫыхӑнни пирки каларӗ. Акӑ республика федерацин «Хӑрушлӑхсӑр тата пахалӑхлӑ ҫул-йӗр» программине хутшӑннӑ май, республикӑра ҫулсене юсассипе иртнӗ ҫул та, кӑҫал та питех те калӑпӑшлӑ ӗҫсем туса ирттерме май килнӗ. Ҫав тӗллевпе уйӑракан укҫа-тенкӗ сумми 2018 ҫулта 5 млрд тенкӗ урлӑ каҫнӑ. Пӗлтӗр те унран кая мар пулнӑ. Ҫак ырӑ улшӑнусене пирӗн районта пурӑнакансем те курма-туйма ӗлкӗрчӗҫ ӗнтӗ. Мӗншӗн тесен, Шупашкар агломерацине кӗнӗ май, асӑннӑ программӑпа пирӗн районта та япӑхса кайнӑ ҫулсене иккӗмӗш ҫул ӗнтӗ юсаҫҫӗ.

Нумай хваттерлӗ ҫуртсене тӗпрен юсассин программине 2014 ҫулта йышӑннӑ. Ӑна 2043 ҫулчченхи тапхӑр валли пӑхса хунӑ. Пӗтӗмпе нумай хваттерлӗ 5110 ҫуртра капиталлӑ юсав ӗҫӗсене туса ирттермелле пулать. Ку ӗҫсене кӑҫал 321 ҫуртра туса ирттерме май килнӗ.

Вениамин Иванович район ҫыннисемпе тӗл пулнӑ чухне пушар хӑрушсӑрлӑхӗ пирки сӑмах пуҫарманни пулманах пуль. Ку хутӗнче те тӗл пулусенче пушар тухасран асӑрханмалли, шыв ҫинче тимлӗ пулмалли, пурлӑха страхламалли, ҫуран ҫӳрекенсен тата автомашина рулӗ умне ларакансен ҫул ҫинче тимлӗхе ҫухатмалла марри пирки анлӑ калаҫу йӗркелерӗ. Сӑлтавӗ те ҫук мар. Ҫакӑ пӗтӗмпех ҫынсен пурнӑҫӗпе ҫыхӑннӑ вӗт-ха. Кӑҫал республикӑра 696 пушар алхаснӑ, 53 ҫын пурнӑҫӗ татӑлнӑ. Пушарсен шучӗ иртнӗ ҫулхи шайран ӳсни палӑрать.

(Вӗҫӗ 2-мӗш стр.)

**28 ОКТЯБРЯ – ПРИЕМ ДЕТСКОГО ВРАЧА-ОФТАЛЬМОЛОГА**
**Адрес: с. Моргауши, ул. Мира, д. 15**
**Запись по тел. 8-967-475-87-57.**
Имеются противопоказания. Проконсультируйтесь со специалистом.
4-10.

**Саламлатпăр**

Юратнă мăшăра, ырă кăмăллă йăмăка – Отаркка ялĕнче пурăнакан **Римма Семеновна ЕФИМОВĂНА** çуралнă кунĕпе чун-чĕререн саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул, савăнăç, иксĕлми вăй-хал сунатпăр. Пирĕнпе тимлĕ пулнăшăн, яланах пулăшма васканăшăн тав сăмахĕ калатпăр. Эпир сана пурте юрататпăр.

Ăшшăн-ăшшăн саламлатпăр
Çывăх çыннăмăр, сана!
Мĕнпур ыррине сунатпăр -
Эсĕ тивĕçлĕ çакна!

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, аппăшĕпе пиччĕшĕсем çемйисемпе.**

Итакачкасси ялĕнче пурăнакан **Юрий Николаевич КРАСИЛЬНИКОВА** 60 çулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн, ăшшăн саламлатпăр, малашнехи пурнăçра та ăнăçусем, çирĕп сывлăх, вăй-хал, çемьере тату пурнăç та телей сунатпăр. Ырă пурнăç çăлтăрĕ йăлтăр-йăлтăр çиçтĕр умăнта. Яланах умри çула ырă тĕллев çутаттăр.



**Салампа: мăшăрĕ, ывăлĕпе кинĕ, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, тăватă мăнукĕ.**

Юратнă çыннăмăра, хаклă аппапа, мăнака – Шетмĕпуç ялĕнче çуралса ӳснĕ, çав ялтах пурăнакан **Манефа Ильинична ИВАНОВĂНА** 85 çулхи юбилей ячĕпе ăшшăн саламлатпăр. Сывлăху çирĕп пултăр, кун-çулу вăрăм килтĕр. Малашне те тăван кил ăшшине упрама иксĕлми вăй-хал сунатпăр.



**Саламлаканĕсем: пиччĕшĕн ачисем Ильинсем, Смирновсем, Зубарĕвсем.**

Пирĕн хаклăран та хаклă çыннăмăра, мăшăра, аттене, маçака, кукаçие – Хорнуй ялĕнче пурăнакан **Юрий Николаевич СКВОРЦОВА** 70 çул тултарнă ятпа ăшшăн саламлатпăр. Ырлăх-сывлăх, телей, ăнăçу, юрату сунатпăр. Пурнăç çулĕ вăрăм та такăр пултăр, вăй-хăвату ан иксĕлтĕр. Хуйхă-суйхă санран пăрăнса çӳретĕр. Пурнăçра мĕн ырри пур, пĕтĕмпех сан валли пултăр. Эпир сана юрататпăр, хисеплетпĕр, санпа мухтанатпăр.



**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, ывăлĕсемпе кинĕсем, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, 6 мăнукĕ.**

Юратнă мăшăра, аттене, асаттене, кукаçие – Мăн Шаптак ялĕнче пурăнакан **Виталий Николаевич ГАВРИЛОВА** пĕтĕм чун-чĕререн сумлă юбилей ячĕпе – 60 çул тултарнă ятпа çепĕç те ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Эсĕ пирĕншĕн чи çывăх та хаклă çын. Эс пурри – пирĕн телей, савăнăç, пуянлăх. Сана эпир çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул, иксĕлми вăй-хăват, телей те ăнăçу сунатпăр. Мăшăрăн юратăвĕ, ачасен хисепĕ, мăнуксен хаваслă сасси сана пурăнма вăй-хал парса тăччăр. Сĕтелӳ çăкăр-тăвартан, кĕрекӳ юратнă тăвансенчен нихăçан та ан таталтăр, мĕн ĕмĕтленни яланах пурнăçланса пытăр.



**Саламлаканĕсем: юратнă мăшăрĕ, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, ывăлĕсемпе кинĕсем, мăнукĕсем.**

Çĕмĕртлĕх Чемей ялĕнче çуралса ӳснĕ **Галина Михайловна ИЛИНБАЕВА** октябрĕн 23-мĕшĕнче 60 çулхи юбилейне паллă тăвать. Ăна эпир юбилей ячĕпе чун-чĕререн ăшшăн саламлатпăр, малашнехи пурнăçра та ăнăçусем, çирĕп сывлăх, вăй-хал, çемьере тату пурнăç та телей сунатпăр. Ырă пурнăç çăлтăрĕ йăлтăр-йăлтăр çиçтĕр умĕнче. Яланах çула ырă тĕллев çутаттăр.

**Салампа: мăшăрĕ, ывăлĕ, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, висĕ мăнукĕ, тăванĕсем, юлташĕсем.**

**Пĕрлехи информаци кунĕ**

# Ыйтăвĕсем кашнинех пырса тивеççĕ

(Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр.)

Район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев çулсем тăвас, кивелнисене юсас, нумай хваттерлĕ çуртсенче капиталлă юсав ĕçĕсем туса ирттерес, пушарсенчен асăрханас енĕпе лару-тăру районта мĕнле шайра пулни пирки каласа пачĕ. Çулсене юсассине илес пулсан, ку енĕпе район федераци тата республика шайĕнчи пур программăна та анлăн хутшăнать. Çавна май ĕçсем те курăмлă. Мĕншĕн тесен район бюджетĕнче пăхса хăварнă çул-йĕр фончĕ шучĕпе çĕнĕрен çулсем тума тата юсама майсем çитмеççĕ. Ку укçа-тенкĕн ытларах пайĕ çулсене тытса тăма расхутланать.

Ростислав Николаевич ялсенче вак чул сарнă çул тăвассине пуçарулăх бюджечĕн мелĕ хальхи вăхăтра çынсемшĕн юрăхлă пулнине палăртрĕ. Çапла майпа кăçал районти 14 ял урамĕнчи çула йĕркене кĕртме май килнĕ пулсан, çитес çул кун пеккисем ытларах та пуласси шанни пирки пĕлтерчĕ.

Нумай хваттерлĕ çуртсенче капиталлă юсав ĕçĕсене туса ирттерессипе кăçалхи плана пурнăçланă ĕнтĕ. Юсав ĕçĕсем туса ирттерме çитес çул валли 5 çурт пăхса хунă.

Çитес вăхăтрах пурнăçа кĕме тытăнакан çĕнĕлĕх – коммуналлă хытă каяша тиесе ăсатнăшăн ял çыннисен те тӳлеме тытăнасси пирки те сăмах пулчĕ. Хальлĕхе пур çĕрте ятарлă контейнерсене вырнаçтарса çитереймен. Çавăнпа та, Ростислав Николаевич палăртнă тăрăх, ял çыннисен малтанласа каяша михĕсене тултарса палăртнă вырăна илсе тухассине йĕркелесен тĕрĕсрех пулать.

Çитес çулхи январь уйăхĕн варринчен телевизорсем аналог телевиденийĕн передачисене йышăнма пăрахаççĕ. Пĕтĕм çĕршыв шайĕпех дециметр хумсемпе сарăлакан цифра эфир телевиденийĕ çине куçаççĕ. Анчах та эфир телевиденийĕн передачисене йышăнма пултарайман ялсем те пур иккен. Пирĕн район территорийĕнче кун пеккисем 8 ял. Катькас ял тăрăхĕнчи Çесмер ялĕнче пурăнакансене те çак шăпа кĕтет. Ростислав Тимофеев кун пеккисене телевиденин «Триколор», «НТВ +» передачисене пăхма çăмăллатнă майсем туса парасси пирки каларĕ.

Информаци кунĕнчи тĕл пулусем ĕçлĕ лару-тăрура иртрĕç. Çынсем хăйсене интереслентерекен ытти ыйту çине те тулли хурав илме пултарчĕç.

**В. ШАПОШНИКОВ.**

# Ялсен шăпи ял çыннин аллинче

**Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Председателĕн çумĕ Александр Федотов тата районти социаллă хӳтлĕх пайĕн ертӳçи Валентина Аникина пĕрлехи информаци кунĕнче Йӳçкасси ял тăрăхĕнче пулчĕç.**

Каламалла, Йӳçкасси ял тăрăхĕ юлашки çулсенче социаллă инфраструктура тĕлĕшĕпе илемленсе те хăтлăланса пырать. Нумаях пулмасть Матьăк Культура çуртне çĕнĕ сăн кĕртрĕç, халĕ акă Йӳçкассинчи Культура çуртĕнче те юсав пырать. Ял тăрăхĕн пуçлăхĕ А. Кузьмин кунти ĕçсем çитес кунсенчех вĕçленессине пĕлтерчĕ. Вырăнти шкулпа ача сачĕ те, ватă çынсемпе инвалидсен çурчĕ те хăтлă. Чиркĕвĕ те мăнаçлăн курăнать. 2019 çулта ав Исетеркке – Актай çула тĕпрен юсама палăртнă. Çак çула тума район чылай укçа-тенкĕ уйăрать. Çакна палăртса А. Федотов вырăнти çынсем те хăйсен тăрăхне аталантарассине тӳпе хывмалли çинчен каласа тесе шухăшлать. «Кунта аталану пур, вырăнти çынсен çак аталану хăватне татах та ӳстерме, апла пулсан вырăнти пурнăç условийĕсене татах та лайăхлатма майсем шырамалла. Кун пеккисене вара пулăшакансем те пур», – пĕлтерчĕ вăл хăйĕн шухăшне.

Кăçал пуçарулăх бюджет мелĕпе йӳçкассисем ача-пăча площадкине хута яма пултарчĕç. «Çакăн пек площадка Матьăк клубĕ умĕнче пулсан та аван. Кун пирки çынсене канашланă, кирлĕ теççĕ, анчах пуçарулăхĕ хальлĕхе сахалрах-ха», – пĕлтерчĕ А. Кузьмин.

Апла кунта «ĕлĕкхи пек» хăçан туса параççĕ, тесе пурăнакансем ытларах-ши? Пурнăç улшăнать тетпĕр пулсан, паян ачи макăрмасăр амăшĕ кăкăр памасть тенине асра тытмалла. Харпăр хăй çуралса ӳснĕ е пурăнакан тăрăха хаклама пĕлмесен вырăнти пурнăç лайăхланасси пирки калаçма та кирлĕ мар. Тепĕр тесен вырăнти ял хуçалăх производство кооперативĕнче те çакăнта пурăнакан çын кăна чуна парса ĕçлеме пултарать.

«Яллă вырăнта та харпăр хăй ĕçне йĕркелесе яма май пур. Çакна çамрăксене ăнлантармалла», – терĕ А. Федотов çынсемпе тĕл пулса калаçнă май.

А. Кузьмин Йӳçкасси ял тăрăхĕнче ял хуçалăхĕпе строительствăра кирлĕ таварпа тивĕçтерессипе, çĕвĕ ĕçне кӳлĕннĕ индивидуаллă предпринимательсен пуррине пĕлтерчĕ. Апла ытти ене хальлĕхе никам та йышăнман.

А. Кузьминпа пĕрле информаци ушкăнĕ вырăнти «Ударник» ял хуçалăх производство кооперативĕн ĕç тăвакан директорĕпе В. Ананьевпа тĕл пулса кооперативри ĕçсемпе кăсăкланчĕ. Шăпах çак кун «Ударникра» çĕр улмине юлашки гектарсем çинчен пухса кĕртетчĕç. Апла кунти çĕр улми уйĕсем пĕтĕмпех пушанчĕç теме юрать. Калаçура В. Ананьев юнашар пушă çĕрсем пуррине, анчах та тĕрлĕ пăтăрмахха пула вĕсене хальлĕхе арендăна илме май çукки çинче чарăнса тăчĕ. Çавăн пекех вăрманланса пыракан çĕрсене çаврăнăша кĕртессипе патшалăх пулăшăвĕ вырăнлă пулмаллине те палăртрĕ. Ку ыйтусене Александр Федотов шута илчĕ.

Юлашки вăхăтра пенси ыйтăвне нумай коллективра хускатаççĕ. Пенси саккунĕсен пуххине улшăнусем кĕртни ял хуçалăхĕнче ĕçлекенсене те тӳрремĕн пырса тивет. Ял хуçалăх сферинче 30 çул ĕçленĕ пулсан, пенсин страхланă пайне тепĕр 25 процент чухлĕ ӳстереççĕ. «Совет саманинче тата хыççăнхи çулсенче ялта çуралса ӳснĕ çын чылайăшĕ ачаранпах хуçалăхра ĕçлесе ӳснĕ. Апла пулсан ял хуçалăхĕнчи ĕç стажне те 30 çула çитерме май пур. Нумайăшĕн ик-виçĕ çул кăна çитмест çак хушма тӳлеве тивĕçме», – тесе тĕрĕсех палăртрĕ А. Кузьмин. Апла пулсан вырăнти хуçалăх ĕçленĕ вăхăтра çак майпа мĕншĕн усă курмалла мар?

Шкулта тата ача садĕнче пулнă май, информаци ушкăнĕ çынсем патне çитерме палăртнă темăсемсĕр пуçне вырăнти ыйтусене те тимлĕх уйăрчĕ.

Шкул директорĕ Ю. Яковлев юлашки çулсенче районти чылай шкулта кадр ыйтăвĕ çивĕчленсе пынине пĕлтерчĕ. Йӳçкасси шкулĕнче те ав чылайăшĕ – выслугăпа пенси илсе тăракан педагогсем. Ку вара, паллă ĕнтĕ, вĕсен çул ӳсĕмĕпе çыхăннă. «Çамрăксем педуниверситетран вĕренсе тухичченех шкула ĕçлеме каймасси пирки калаççĕ пулсан, вĕсем çак ĕç килĕшнипе килĕшменнине те нихăçан та пĕлеймĕç. Направленипе вĕренме кĕрекенсем те пур республикăра, анчах вĕсем те специальноçпа ĕçлемеççĕ. Çавăнпа та ку ыйтупа тимлеме палăртмаççĕ-ши республикăра?» – тесе кăсăкланчĕ шкул директорĕ.

А. Федотов унпа килĕшрĕ. Çак ыйтупа республика шайĕнче калаçусем пуçланнине пĕлтерчĕ.

Информаци кунĕнче йӳçкассисем ытти ыйтăва та хускатрĕç. Хуравсене илнĕ май, Йӳçкасси тăрăхĕнче пурăнакансем кунти малашлăх пирки ытларах шухăшлама тытăнасса ĕненес килет.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

# Пенси ыйтăвĕпе урок иртрĕ

**Информаци кунне ирттерекенсем ял çыннисен пурнăçĕпе, вĕсен шухăш-кăмăлĕпе кăсăкланни Юнкă ял тăрăхĕнче те тĕп вырăнта пулчĕ. Кунта килсе çитнĕ ĕç ушкăнне Раççей Федерацийĕн Пенси фончĕн Чăваш Республикинчи уйрăмĕн управляющийĕ Роза Кондратьева ертсе пычĕ. Тĕл пулусене хутшăннисене вăл тата район администрацийĕн ятарлă программăсен пайĕн пуçлăхĕ Геннадий Любимов, РФ Пенси фончĕн Шупашкар районĕнчи управленийĕн районти пайĕн ертӳçи Ирина Гришина кун йĕркинчи ыйтусене тĕплĕн çутатса пачĕç.**

Ĕç ушкăнне Юнкă ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Валерий Фомин кĕтсе илчĕ, хăйсен тăрăхĕнчи пĕтĕмĕшле лару-тăрупа паллаштарчĕ.

– Йывăрлăхĕсем пур. Эпир вĕсене курса тăратпăр. Çивĕч ыйтусене ялсенче пурăнакансемпе пĕрле пулса вăхăтра татса пама тăрăшатпăр. Çапла вара юлашки çулсенче республика программипе тухăçлă усă курса Юнкă салинчи Яркунеки урамĕнче 830 метр, Кăпасра 1340 метр çĕнĕ çулсем турăмăр. Кунсăр пуçне ял тăрăхĕнчи çул-йĕр фондне пухăннă укçапа Юнкăри пĕр урама 220 метр вак çул сартăмăр, ача-пăча валли спорт лапамĕ уçрăмăр. Халĕ район тата ял тăрăхĕн бюджечĕсемпе усă курса Кăпаса шыв пăрăхĕ улăштарасси çинчен ĕçлетпĕр. Умри тĕллевсем тата пысăкрах, – терĕ ĕç ушкăнне ял тăрăхĕпе паллаштарса Валерий Витальевич.

Кун хыççăн ĕçлĕ тĕл пулусем Юнкăри врач амбулаторийĕнче, Юнкăри вăтам шкулта, Çармăçкасси ял клубĕнче, Юнкăри Культура çуртĕнче иртрĕç. Кашни тĕл пулурах Р. Кондратьева ял çыннисене пенси тытăмĕнчи улшăнусемпе тата çĕнĕлĕхсемпе, республикăра çул-йĕр тăвассипе, нумай хваттерлĕ çуртсене юсассипе тĕплĕ калаçусем ирттерчĕ. Кунпа пĕрлех Раççейре пенсие тухмалли вăхăта ӳстерни май, ял çыннисем хушшинче çуралнă ыйтусене хуравласа тĕплĕ ăнлантару ирттерчĕ.

Район администрацийĕн ятарлă программăсен пайĕн пуçлăхĕ Г. Любимов районти пушар хăрушсăрлăхĕ çинче уйрăммăн чарăнса тăчĕ. Пукрав иртнĕ май, хĕл сиввичен те инçе мар. Çавăнпа та пӳрт-çурта хутса ăшăтмалли тата электричествăпа ытларах усă курмалли тапхăр пуçланать. Çавăнпа та кăмакасемпе электричество кабелĕсен юсавлăхĕ малти вырăна тухса тăрать. Унччен хĕл тапхăрĕсене тишкерсен те, пушар юсавсăр кăмаксемпе мăрьесенчен тата электричество кабелĕсенчен хăйĕн çулне нумай çунни курăнать. Çавăнпа та хĕле кĕриччен ăшă кунсенче вĕсен юсавлăхне тепĕр хут тĕрĕслесе тухни никамшăн та ытлашши пулмĕ.

– Кăçал районта тухнă 31 пушартан 27-шĕ пурăнмалли çурт-йĕрте пулни, ирĕке кайнă çулăм тыткăнĕнче 3 çын пурнăçĕ вăхăтсăр татăлни çӳлерех калани пушă сăмах пулманнине çирĕплетет, – терĕ вăл ял çыннисене пушар хăрушсăрлăх правилисемпе паллаштарса. – Пушарсен пысăк пайĕ мунчасемпе çыхăнăран, ял çыннисен черетлĕ хĕл сиввисем умĕн мунчасем тĕлĕшпе сисчĕвлĕхне вăйлатмалла.

Пĕрлехи информаци кунĕнче И. Гришина Юнкăри вăтам шкулта вĕренекенсемпе «Йăлтах пулас пенси пирки» темăпа усă урок ирттерчĕ. Сăмах май, ку вăл районти вăтам шкулсенче вĕренекенсемпе ку темăпа ирттернĕ 7-мĕш урок пулчĕ.

Ирина Анатольевна хăйĕн урокне пенси мĕнле пĕлтерни тата РФ Пенси фончĕ çынсене мĕнле пулăшу пани пирки калаçнинчен пуçларĕ.

Пенси вăл – гражданссене ватлăхра гарантиллĕ тĕкĕ паракан тӳлев. Çавăнпа та пулас пенси пирки çынсен ачаран шутлама пуçламалла. Çавăн чухне çеç сирĕн обязательнăй пенси страхованийĕн счечĕ (СНИЛС) çине те çителĕклĕ укçа-тенкĕ пухăнĕ. Апла пулсан ватлăх та канлĕрех пулĕ.

Пенси фончĕнчен пăрăнса каяс мар тесен, тивĕçлĕ ĕç укçине ĕç килĕшĕвĕпе çеç илни пулăшнине ачасем ăнланни вĕсем пурнăç çулĕ çине тухма пĕр енчен хатĕрри пирки калать.

– СНИЛС мĕн тума кирлĕ? - ыйтрĕ урока ертсе пыракан. Хуравне те хăех пачĕ. Çак счет çинче çын ăçта тата епле ĕçленин кăтартăвĕ палăрса пырать. Ăна патшалăх порталĕнче харпăр хăйĕн кабинетне кĕрсе кашниех йĕрлесе пырайрать.

– Пенси виçи çине мĕнле факторсем витĕм кӳреççĕ? – пулчĕ пенси ыйтăвĕпе интересленсе кайнă ачасен ыйтăвĕ.

Муркашри пенси пайĕн ертӳçи пулас пенси виçи пенси балĕсене вĕсен хакĕ çине хутланипе тата пулнă виçе çумне çирĕплетнĕ тӳлеве хушнипе пулнине ачасене формула çырсах ăнлантарчĕ.

Ватлăх çитсен страхланă пенсие илме 15 çултан кая мар ĕç стажĕ кирли ачасемшĕн çĕнĕлĕх пулчĕ. Ача амăш капиталĕпе епле усă курмалли çинчен вара ачасем те пĕлессĕ иккен.

Урок вĕçĕнче ыйтусем çине ачасем тĕрĕс хуравсем пани вĕсем темăна лайăх ăнланнине çирĕплетрĕ.

**А. БЕЛОВ.**

**Октябрĕн 21-мĕшĕ – Çул-йĕр хуçалăх ĕçченĕсен кунĕ**

# Çулсен пахалăхĕ лайăхланать

***Пурте курса тăратпăр, юлашки çулсенче çул-йĕр строительстви, çулсене юсаса нормативлă кирлĕ шая çитересси çине çĕршыв шайĕнчех самай ытларах тимлĕх уйăрма тытăнчĕç. Ку енĕпе тĕрлĕрен программа йышăннă. Вĕсене пирĕн район анлăн хутшăннă май, районта та çулсем тăвас, ваннисене юсас, пуррисене кирлĕ шайра тытса тăрас енĕпе палăрамлă улшăнусем пулса иртеççĕ.***

***Çак ĕçсене тӳрремĕн пурнăçлаканĕсем вара – çул-йĕр хуçалăх ĕçченĕсем. Ыран вĕсем хăйсен професси уявне – Çул-йĕр хуçалăх ĕçченĕсен кунне паллă тăваççĕ. Уяв кунĕ умĕн район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕпе – капиталлă строительство тата общество инфраструктурине аталантарассин пайĕн пуçлăхĕпе Алексей МАТРОСОВПА тĕл пултăм, районта кăçал çулсем тăвас тата киввисене юсас ĕçсем мĕнле пулса пыни пирки каласа пама ыйтрăм.***

**– Алексей Николаевич, район Шупашкар агломерацине кĕнĕ май, федерацин «Хăрушлăхсăр тата пахалăхлă çул-йĕр» программи шайĕнче иккĕмĕш çул ĕнтĕ районта район çулĕсене юсассипе калăпăшлă ĕçсем туса ирттереççĕ. Программăпа палăртнă кăçалхи ĕçсене пĕтĕмлетме май пур-и?**

– Асăннă программăпа 2017 çулта 1,7 километр «Волга» – Вăрăмой» çула тĕпрен юсама, Мăн Сĕнтĕр, Йӳçкасси, Ярапайкасси, Юнкă, Муркаш, Чуманкасси шкулĕсем çывăхĕнчи çынсем çул урлă каçмалли вырăнсене хăрушсăрлăх хатĕрĕсемпе тивĕçтерме май килчĕ пулсан, кăçалхи ĕçсем татах калăпăшлăрах. Юсав ĕçĕсем тăватă объектра пычĕç. Федераци программи шайĕнче кăçал 1 километр çурă ытла «Тойкилтĕ – Кĕртекасси», 9 километр тăршшĕ «Муркаш – Хорнуй – Платкасси», 6,4 километр тăршшĕ «Волга» – Шомик», 7 километра яхăн «Мăн Сĕнтĕр – Мăн Хураçка – Ишмула» çулсене юсама май килчĕ.

Асăннă объектсенче ĕçсем паянхи куна вĕçленнĕ. Вĕсене пурне те комисси йышăннă. Юсав ĕçĕсене акционерсен «ТУС» обществин тата чикĕллĕ яваплăхлă «СМУ» общество строителĕсем пурнăçларĕç. Программăпа кăçал çулсене пĕтĕмĕшле 24 километра яхăн юсама май килчĕ. Çавна валли федераци, республика тата район бюджечĕсенчен пĕтĕмĕшле 109 млн та 646 пин тенкĕ уйăрнă.

**– Программа шайĕнчи çитес çулхи ĕçсем пирки калаçма иртерех-и?**

– Паллах, улшăнусем пулма пултараççĕ. Хальлĕхе ку программăпа çитес çул 7,2 километр тăршшĕ «Исетерккĕ – Актай» çула тата Муркашри Парковая урамри 800 метр çула юсама палăртатпăр. Кунпа пĕрлех «Муркаш – Турай – «Сура» çул çинче те юсав ĕçĕсем туса ирттерĕç. Çирĕплетсе çавна кăна калама пултаратăп: программăна икĕ çуллăха кăна мар, 2025 çулччenхи тапхăр валли пăхса хунă, çавăнпа та асăннă программа шайĕнче районта çулсене юсассин ĕçĕсем малашне те пулса пырĕç.

**– Федерацин «Хăрушлăхсăр тата пахалăхлă çул-йĕр» программи район пĕлтерĕшлĕ тата республика çулĕсене юсаса нормативлă шая çитерессипе çыхăннă. Кусем вĕсем – асфальт сарнă çулсем. Çав вăхăтрах хальхи вăхăтра ялсенче вак чул сарса хытарман çулсем те пайтах вĕт-ха?**

– Лару-тăру ку енĕпе те лайăх еннелле улшăнма тытăнни палăрать. Вырăнти инфраструктурăна аталантарассипе республикăра пуçарулăх бюджечĕн мелĕпе анлăн усă курма пуçларĕç. «О реализации на территории Чувашской Республики проектов развития общественной инфраструктуры, основанных на местных инициативах» Указа республика Пуçлăхĕ 2017 çулхи январĕн 30-мĕшĕнче алă пуснăччĕ. Çапла майпа вырăнти ыйтусене, вăл шутра, калăпăр, урам хушшинчи çула вак чул сарса хытарассин ыйтăвне те, пĕр çулталăк хушшинчех татса пама пулать. Кирлĕ суммăн 60 процентне республика уйăрать, 20 процентран ытла мар ял тăрăхĕн бюджечĕн расхутланас пулать тата çавăнтан кая мар ял çыннисен хăйсен пухма тивет.

Асăннă майпа кăçал 16 ял тăрăхĕнчен республика комиссине тăратнă 19 проект пурнăçа кĕрет. Вĕсен пĕтĕмĕшле хакĕ 14 млн тенкĕлĕх ытла. Ял çыннисем 2,5 млн тенкĕ ытла пухса панă. 19 проектран 14-шĕ шăпах ĕнтĕ ял урамĕсенчи çулсене юсассипе çыхăннисем.

**– Алексей Николаевич, районăн хăйĕн çул-йĕр фончĕ пысăках мар ĕнтĕ. Апла пулин те ку укçа-тенкĕпе те хăш-пĕр ĕçсене туса ирттерме май килнех пулĕ?**

– Районăн çул-йĕр фончĕ кăçал 47 млн тенкĕ ытларах. Ытларах пайне ялсем хушшинчи пурте усă куракан çулсене юсама тата тытса тăма уйăратпăр. Çав тĕллевпе 33 млн тенкĕ те 668 пин тенкĕ пăхса хунă пулсан, 27 млн тенкĕ ытларах усă курнă ĕнтĕ. Уйăммăн илес пулсан, çулсене тытса тăма 23 млн тенкĕ ытла тата юсама 10,5 млн тенкĕ уйăрма палăртнă.

Çул-йĕр фончĕ шучĕпех район çулĕсем çинче маршрут автобусĕсем чарăнмалли вырăнсене юсаса ларса çӳрекенсем валли автопавильонсем 16 вырнаçтартăмăр. Ĕçсене «Сокол» ООО пурнăçларĕ. Уйăрнă сумма 3,5 млн тенкĕ ытла.

Чуманкасси, Йӳçкасси, Мăн Сĕнтĕр, Юнкă шкулĕсем патĕнче «Алсер-Строй» СК ООО строителĕсем 2 млн тенкĕлĕхе яхăн ĕçсем пурнăçларĕç, тротуарсене юсаса пĕтерчĕç. Асăннă общество строителĕсемех «Шупуç – Çĕньял Очăкасси – Очăкасси», «Муркаш – Хорнуй – Платкасси», «Тойкилтĕ – Кĕртекасси», «Волга» – Пĕрремĕш Май выççăлкки», «Волга» – Канаш выççăлкки», «Мăн Шашкар – Мемеккасси – Хунтăкасси» автомобиль çулĕсем çинче барьер чикĕлевĕсене тăвассипе те ĕçлерĕç.

Çул-йĕр фондĕнче çулталăклăх пăхса хăварнă укçа-тенкĕрен хальлĕхе усă курманни 4 млн тенкĕ ытларах. Çулталăк вĕçленмен-ха. Ăна çулсем çинче кĕркуннехи юсав ĕçĕсене туса ирттерме, çавăн пекех «Сура» – Чемей», «Волга» – Мулкачкасси – Оринин» çулсем çинче автобус чарăнăвĕн площадкисене тата автопавильонсем тума тата ытти хăш-пĕр ĕçсене пурнăçлама уйăрма пăхнă. Ĕçсене кăçалхи ноябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне вĕçлеме палăртатпăр.

***КĔСКЕ СПРАВКА. Район территорийĕпе иртекен автомобиль çулĕсен пĕтĕмĕшле вăрăмăшĕ 730 км ытла. Вăл шутран М-7 «Волга» çул тăршшĕ 27,5 км. Республика пĕлтерĕшлĕ çулсем 94 км ытла. Район пĕлтерĕшлĕ çулсем 213,9 км, вăл шутран сарса хытарнисем 204,1 км. Ял çулĕсем 394,8 км, вăл шутран сарса хытарнисем 102,4 км.***

**– Ялсенчи урам çулĕсене тытса тăрасси тата юсасси вара ял тăрăхĕсен тивĕçĕ пулса тăрать ĕнтĕ.**

– Укçи-тенки нумаях мар пулин те, май килнипе ыйтăвĕсене татса памах тивет. Ялсенчи çулсене тытса тăма тата юсама ял тăрăхĕсен бюджечĕсенче 13 млн тенкĕ ытларах пăхса хăварнă. Вăл шутран çулсене тытса тăма 6,5 млн тенкĕ тата юсав ĕçĕсене туса ирттерме 6,8 млн тенкĕ. Патшалăх контракчĕсемпе пăхнă юсав ĕçĕсене октябрь уйăхĕнче вĕçлеме шутлатпăр.

Çавăн пекех кăçал Тренккă ялĕнчи Новая урамри 4-мĕш номерлĕ çуртăн картиш территорине юсама май килчĕ. Çур миллион тенкĕлĕх юсав ĕçĕсене Ю. Матросов предприниматель пахалăхлă пурнăçларĕ.

**– Алексей Николаевич, калаçăва вĕçленĕ май мĕн калас кăмăл пур?**

– Çул-йĕр хуçалăх ĕçченĕсене – çул тăвакансене, юсакансене, çулсене пăхса-тытса тăрассипе куллен тăрăшакансене, пархатарлă çак ĕçре вăй хурса тивĕçлĕ канăва тухнисене хăйсен ыран паллă тăвакан професси уявĕпе саламласа тав сăмахĕ калатăп тата ырлăх-сывлăх, ăнăçу сунатăп.

**В. ШАПОШНИКОВ** калаçнă.

**Пĕрлехи информаци кунĕ**

# Тивĕшсем ФАП куллен ĕçлессе кĕтеççĕ

**Чăваш Республикин «Республиканский центр медицины катастроф» бюджет учрежденийĕн тĕп врачĕ Ольга Краузе ертсе пыракан ушкăн Шетмĕпуç ял тăрăхне çитсе килчĕ.**

Чи малтанах ĕç ушкăнĕ врач офисĕнче пулчĕ. Кунти врач Эльвира Петрова пĕтĕмĕшле ĕç-хĕлпе паллаштарчĕ. Ольга Краузе вакцинаци епле пынипе, пĕтĕмĕшле ĕç-хĕле йĕркеленипе, çавăн пекех васкавлă пулăшупа тивĕçтерессине республика шайĕнче централизациленĕрен, çак çĕнĕлĕх кулленхи ĕçре мĕнле витĕм кӳнипе, ку тĕлĕшри хаклавпа кăсăкланчĕ.

Вырăнти врач каланă тăрăх, вакцинаци тăвассине çынсем ырласа йышăнаççĕ. Прививкăна ачасене туса пĕтернĕпе пĕрех, çитес вăхăтра вакцинăн тепĕр партине кӳрсе килмелле, çавна май палăртнă ĕçе тивĕçлĕ шайра пурнăçлама май пур. Çынсене меллĕ пултăр тесе кунта ытларикунсерен тĕрлĕ анализ илессине, çавăн пекех хăш-пĕр категорин ЭКГ тĕрĕслевне вырăна тухса тăвассине йĕркеленĕ. Çак ĕçсемпе çынсем кăмăллă.

Васкавлă пулăшăва централизациленине вырăнти врач лайăх енĕпе хаклать, территоринчи çын патне çак служба килсе кайнă пулсан, тепĕр вăхăтран, тĕслĕхрен, Шетмĕпуçĕнчи медицина ĕçченĕ ун пирки информацие пĕлме, енчен те çынна пулăшу парса киле хăварнă пулсан, малашнехи сиплев курсне палăртма пултарать.

Кунта хальлĕхе палăртнă кунсенче Муркашран стоматолог врач килсе çӳрет, çавна май çынсем çитес вăхăтра асăннă специалист тăтăшах вырăнта ĕçлекенни пуласса шанаççĕ.

Черетлĕ тĕл пулу Шетмĕпуç шкулĕнче иртрĕ. Шкул ертӳçи Николай Степанов каланă тăрăх, кунта 63 ача вĕренет, шкулччeнхи вĕренӳ учрежденийĕнче – 31 ача.

Учительсен коллективĕпе тĕл пулнă май, район администрацийĕн финанс пайĕн ертӳçи Рената Ананьева пушар хăрушсăрлăх йĕркине пăхăнма ыйтрĕ, ыттисене те çакăн пирки асăрхаттарма сĕнчĕ, сыхлăх тĕлĕшпе пушар сӳнтермелли хатĕр туянни тата пурлăха страхлани вырăнлă пулассине палăртрĕ.

Çитес çултан пуçласа çĕршывĕпех цифра телевещанийĕпе усă курма пуçăнатпăр, çавна май аналоглă телевидени пăрахăçланать. Енчен те хăшĕ-пĕри хăйĕн телевизорне цифра телевещанийĕн передачисене йышăнма хатĕрлесе çитермен пулсан, вĕсен федераци каналĕсем вырăнне январĕн 14-мĕшĕнчен пуçласа хура экран курма тивĕ. Çĕнĕ йышши телевизорсен вара ку енĕпе йывăрлăх пулмасса, вĕсем каналсене пĕр чăрмавсăрах йышăнасса палăртаççĕ. Тĕл пулусенче çынсем ку ыйтупа та кăсăкланчĕç.

Йăлари хытă каяша пухасси тата турттарса тухасси хальлĕхе чылайăшне пăшăрхантарать, çавăн пекех кунта татса паман ыйту та çук мар. Çынсене ку тĕлĕшри тариф тата ĕç йĕрки кăсăклантарчĕ.

Тивĕшсен – хăйсен чун ыратăвĕ, кадр ыйтăвĕ. Вĕсем сывлăх сыхлавĕпе ытларах калаçма хатĕрленни палăрчĕ, çавна май ялти Культура çуртне йышлăн пухăннă. Кунти ФАП-ра куллен ĕçлекен фельдшер çукки çынсене питĕ пăшăрхантарать. Хальлĕхе эрнере пĕр хут Шетмĕпуçĕнчен Эльвира Петрова врач килсе çӳрет. Анчах ку, ял çыннисен шучĕпе, çителĕксĕр.

Ыйту хыççăн ыйту тухрĕ, вăл шутра васкавлă пулăшу енĕпе те. Медицина ĕçченĕ Ольга Краузе кашни ыйтăва хуравлама тăрăшрĕ.

Асăннă ялти ятлă-сумлă Галина Волкова пенсионерка пирки вĕççĕр-хĕрсĕр ырă сăмах каламалла. Вăл, питех те хастар пулнă май, вырăнти тĕрлĕ ĕçе йĕркелеме, çынна май пур таран пулăшма тăрăшать, вăл шутра хăйĕн укçи-тенкине хĕрхенмесĕр вăл е ку препарат туянса медицина енĕпе пĕрремĕш пулăшу парассипе те, профилактика енĕпе те.

Çавăн пекех унăн ял библиотекишĕн те чун ыратать. Халĕ библиотекăра юсав туса пĕтернĕпе пĕрех ĕнтĕ. Чӳречесем кивĕ пулнăран çуркаланса пĕтнĕ, хĕл сиввисем пуçланиччен вĕсене çĕннипе улăштарма пулăшу ыйтрĕ. Çавăн пекех ытти ыйтăва та хускатрĕç тивĕшсем, çапах та ФАП, вăл шутра унта юсав ирттерессИ, кадр ыйтăвĕ чи малта пулчĕ.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

# Хисеп грамотипе наградăлана

Район администрацийĕн 2018 çулхи октябрĕн 10-мĕшĕнчи 1144-мĕш номерлĕ йышăнăвĕпе çаксене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăлана:

1. Нумай çул хушши тăрăшса вăй хунăшăн тата машиностроени отраслне аталантарма тивĕçлĕ тӳпе хывнăшăн:

- **Анастасия Владимировна БАКШАЕВĂНА,** «Чебоксарское предприятие «Сеспель» ЗАО финанспа экономика пайĕн пуçлăхне;
- **Алексей Алексеевич ИВАНОВА**, «Чебоксарское предприятие «Сеспель» ЗАО ОМТС водитель-экспедиторне;
- **Игорь Михайлович КОЖЕВНИКОВА**, «Чебоксарское предприятие «Сеспель» ЗАО механосборка ĕçĕсен слесарьне;
- **Дмитрий Сергеевич КОНДРАШЕВА**, «Чебоксарское предприятие «Сеспель» ЗАО ПДО пуçлăхне;
- **Артур Вадимович КОШКИНА,** «Чебоксарское предприятие «Сеспель» ЗАО хатĕрлев участокĕн маçтăрне;
- **Илья Аркадьевич МАЛОВА**, «Чебоксарское предприятие «Сеспель» ЗАО завод лабораторийĕн пуçлăхне;
- **Юрий Николаевич НИКОЛАЕВА,** «Чебоксарское предприятие «Сеспель» ЗАО ЧПУ станокĕсен операторне;
- **Александр Николаевич СУВОРОВА**, «Чебоксарское предприятие «Сеспель» ЗАО пĕрремĕш класлă водительне;
- **Андрей Николаевич ТРОФИМОВА,** «Чебоксарское предприятие «Сеспель» ЗАО инженер-программистне;
- **Дмитрий Леонидович ФИЛИППОВА,** «Чебоксарское предприятие «Сеспель» ЗАО механика участокĕн маçтăрне.

2. Ял хуçалăх производствинче нумай çул хушши тăрăшса вăй хунăшăн:

- **Геннадий Евтихеевич АЛЕКСЕЕВА,** «Моргаушская» чăх-чĕп фабрикин тракторист-машинистне;
- **Олег Алексеевич ВИШНЕВА,** «Моргаушская» чăх-чĕп фабрикин котельнăй операторне;
- **Галина Александровна ДИМИТРИЕВĂНА,** «Моргаушская» чăх-чĕп фабрикин чăх-чĕп пăхаканне;
- **Елена Филимоновна ДМИТРИЕВĂНА,** Суворов яч. хис. хуçалăхăн выльăх пăхаканне;
- **Ольга Михайловна ИВАШКОВĂНА,** «Моргаушская» чăх-чĕп фабрикин тĕп бухгалтерĕн çумне;
- **Фаина Васильевна КАЛИКОВĂНА,** «Моргаушская» чăх-чĕп фабрикин чăх-чĕп пăхаканне;
- **Ольга Геннадьевна КОЖАНОВĂНА,** «Моргаушская» чăх-чĕп фабрикин çăмарта йышăнаканне;
- **Андрей Евгеньевич ЛОПАТИНА,** Суворов яч. хис. хуçалăхăн автотрактор паркĕн трактористне;
- **Арефий Геннадьевич ЛЮБИМОВА,** «Герой» хуçалăхăн пушар хуралĕн автомобиль водительне;
- **Людмила Алексеевна ОХЛИНĂНА,** «Моргаушская» чăх-чĕп фабрикин çăмарта йышăнаканне;
- **Алевтина Германовна РУСАКОВĂНА**, «Моргаушская» чăх-чĕп фабрикин чăх-чĕп пăхаканне;
- **Инга Леонидовна СОЛОВЬЕВĂНА,** «Герой» хуçалăхăн тĕп бухгалтерне;
- **Андрей Иосифович СОЛОМИНА,** «Моргаушская» чăх-чĕп фабрикин автотрактор цехĕн пуçлăхне;
- **Вячеслав Николаевич СТЕПАНОВА**, «Моргаушская» чăх-чĕп фабрикин автомобиль водительне;
- **Александр Викентьевич ТАНЬКОВА,** И.Г. Скворцовăн хресчен (фермер) хуçалăхĕн тракторист-машинистне;
- **Петр Иванович ХАРИТОНОВА,** «Моргаушская» чăх-чĕп фабрикин электромонтерне;
- **Татьяна Александровна ШАДРИНĂНА,** «Моргаушская» чăх-чĕп фабрикин çăмарта йышăнаканне;
- **Андрей Владимирович ШЕЯНОВА,** «Моргаушская» чăх-чĕп фабрикин хăрушсăрлăх службин пуçлăхне;
- **Галина Аркадьевна ЯЛУШКИНĂНА,** «Моргаушская» чăх-чĕп фабрикин ветеринари санитарне.

3. Çитĕнекен ăрăва вĕрентсе воспитани парас енĕпе тунă çитĕнӳсемшĕн тата нумай çул хушши тăрăшса вăй хунăшăн:

- **Лия Львовна ПОРФИРЬЕВĂНА,** «Золушка» ача сачĕн воспитательне.

4. Вĕренӳ сферинче нумай çул хушши тăрăшса вăй хунăшăн:

- **Нина Алексеевна БУРЦЕВĂНА,** Шурча шкулĕн поварне;
- **Галина Михайловна ОХАРИНĂНА,** Тойкилтĕ шкулĕн служба пӳлĕмĕсене тасатаканне.

Призыв

# Сумлӑ тивӗҫе пурнӑҫлама хатӗр

**Ҫак эрнере Муркаш районӗнчи призыв комиссийӗ ӗҫлерӗ. Право сыхлав органӗсен тата социаллӑ сфера представителӗсенчен тӑракан комисси призывниксен харпӑр хӑй тӗлӗшпе йӗркеленӗ ӗҫӗсемпе паллашрӗ, призывниксемпе куҫа-куҫӑн уйрӑммӑн тӗл пулса калаҫнӑ май, вӗсен шухӑш-кӑмӑлне те пӗлчӗ.**

Комисси членӗсем умне пӗрин хыҫҫӑн тепри черетпе призывниксем кӗчӗҫ. Вӗсем медицина комиссийӗн тӗрӗслевне тухнӑ. Яшсен калаҫӑвӗнчен ҫара каяс шухӑшӗ ҫирӗп пулни палӑрчӗ. Техникум е колледж, аслӑ вӗренӳ заведенийӗнчен вӗренсе тухнӑ хыҫҫӑн салтак ретне тӑрас текен сахал мар, мӗншӗн тесен ҫарти служба малашнехи ӗҫ карьери ҫине витӗм кӳнине саккунпа ҫирӗплетнӗ. «Паянхи призывниксем саккун витӗмӗ чӑнах та пуррине кӑтартса параҫҫӗ», - палӑртса каларӗ комисси председателӗ – район пуҫлӑхӗ Игорь Николаев.

Темиҫе призывниках разведкӑна юрӑхлипе интересленчӗ. Астӑвасса, ҫуркуннехи призыврах акӑ «морфлота каясшӑн, спецназа лекесшӗн е десантник пуласшӑн» текеннисем чылайрахчӗ.

Призывниксен йышӗнче ҫартан таврӑннӑ хыҫҫӑн полици уйрӑмне ӗҫлеме вырнаҫас текен те пулчӗ. Анчах вӑл та, хальхи вӑхӑтри ытти чылай ҫамрӑк пекех, ӗҫ биографине пысӑк хулара пуҫлас ӗмӗтлӗ.

Палӑртмалла, контракт ҫырса ҫара каяс текенсем те пур призывниксен йышӗнче. Кун пек шухӑшлӑ ҫамрӑксем контракт ҫырни пурнӑҫри стабильлӗхпе сыхӑннине шута илеҫҫӗ.

Комисси членӗсем призывниксемпе калаҫнӑ вӑхӑтра куҫ умне темӗн тӗрлӗ шӑпа тухса тӑчӗ. Пӗрисем шкултан вӗренсе тухнӑ хыҫҫӑн ҫара каяҫҫӗ, мӗншӗн тесен малалла вӗренме ҫемьере укҫа-тенкӗ пулман, теприсем акӑ университетра тӳлевлӗ меслетпе вӗреннӗрен, хӑй ӗҫлесе илме тӑрӑшса, вӗренӳре ӗлкӗрсе пыраймӗ пулнӑ, вӗренме пӑрахнӑ. Виҫҫӗмӗшӗсем вӗренсе тухнӑ, ӗҫлеҫҫӗ, анчах карьерӑра ҫар билечӗ кирлӗ пулса тухнӑ...

Апла пулин те комиссин тӗп ыйтӑвне хуравлассипе вӗсен кӑмӑлӗ пӗр пек.

– Ҫара каясшӑн-и? – тесе кашнинченех ыйтаҫҫӗ.

– Паллах.

– Каясшӑн.

– Тахҫантанпах хатӗрленсе пынӑ, каясшӑн.

Ҫакӑн пек хуравлакансем хӑйсем ӗмӗтленнӗ ҫар тӗсӗн чаҫне лекесси пирки пӗлсен, алӑкран тухсанах ҫара кайма хатӗр пек тӑраҫҫӗ. Вӗсемшӗн савӑнмалла кӑна.

Шел пулин те, ҫара каяссинчен пӑрӑнакансем те пур. Иртнӗ ҫулсенче «ирӗкре» ҫӳренӗ, халӗ 28 ҫул тултарнӑскерсен, вӗсене призыв комиссийӗ саккунпа килӗшӳллӗн ҫар билечӗ мар, справка кӑна пама йышӑннине пӗлсен, кӑмӑлӗсем самаях пӑсӑлчӗҫ. Мӗншӗн тесен вӗсем ҫар комиссариатне «улталаса» хӑйсене яланлӑхах улталанине ӑнланса илчӗҫ. Кун пек справка пачах та ҫар билечӗ мар, вӑл умри ҫула уҫмасть, хупласа пырать кӑна.

Пӗлтӗрхи кӗрхи призывран Президент полкӗнче хӗсметре тӑма тивӗҫлӗ яш пулчӗ пирӗн районтан. Кӑҫалхи призывниксен йышӗнче те ҫак полкра хӗсметре тӑма тивӗҫлӗ кандидатура пур. Ӑна комисси канашлакан пӳлӗме кӗрсенех уйӑрса илме май пулчӗ: ҫӳллӗ, кӗрнеклӗ, куҫӗ ялкӑшать, хӑйне питӗ йӗркеллӗ тытать, ӑслӑ-тӑнлӑ калаҫать. Пурнӑҫра тӗллевӗсем пысӑкки палӑрать.

Пӗтӗмӗшле илсен вара пирӗн районти призывниксен ҫара каяс кӑмӑлӗ пысӑк. Раҫҫей ҫарӗнче хӗсметре тӑрасси – вӗсемшӗн сумлӑ тивӗҫ.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

Ларуран

# Пӗлтерӗшлӗ ыйтусем тавра

**Районти общество канашӗн черетлӗ ларӑвӗ район администрацийӗнче октябрӗн 16-мӗшӗнче иртрӗ. Лару ӗҫне канаш членӗсем, район администрацийӗн пуҫлӑхӗ Ростислав Тимофеев, райадминистрацин яваплӑ ӗҫченӗсем хутшӑнчӗҫ. Ларӑва канаш ертӳҫи Владислав Ананьев ертсе пычӗ.**

Канаш членӗсем малтанах терроризмпа экстремизм пулӑмӗсене асӑрхаттарассипе, унӑн сиенӗсене пӗтерессипе районта туса ирттерекен ӗҫсем пирки сӳтсе яврӗҫ. Кун пирки район администрацийӗн ятарлӑ программӑсен пайӗн пуҫлӑхӗ Геннадий Любимов каласа пачӗ.

Район территорийӗнче тӗрлӗ наци ҫыннисем пурӑнать. Чӑвашсемсӗр пуҫне ытларах вырӑссем, ҫармӑссем, тутарсем. Ҫынсем хушшинче наци тата тӗн ӗненӗвӗ тӗлӗшпе тухнӑ хирӗҫӳсем пулман. Терроризм тата экстремизм пулӑмӗсенчен асӑрханассипе профилактика мероприятийӗсене ятарлӑ планпа килӗшӳллӗн туса ирттереҫҫӗ. Ҫӑлав тата йӗркелӗхе тивӗҫтерекен службӑсен тренировкисемпе ученийӗсене йӗркелени те пысӑк пӗлтерӗшлӗ.

Юлашки вӑхӑтра социаллӑ объектсенче тимӗр детекторӗсене вырнаҫтарасси ҫине пысӑк тимлӗх уйӑрнӑ. Асӑрхаттару тематикипе буклетсем хатӗрленӗ. Шкул ачисемпе, ҫамрӑксемпе тӗл пулнӑ чухне те экстремизмпа, терроризмпа ҫыхӑннӑ инкек-синкекрен асӑрханасси, вӗсен сиенӗсене пӗтересси пирки калаҫу тӑтӑшах йӗркеленӗ.

Апла пулин те, район администрацийӗн пуҫлӑхӗ Ростислав Тимофеев палӑртнӑ тӑрӑх, хальхи вӑхӑтра Интернетри социаллӑ сетьсем, тӗрлӗ сайт тӗлӗшпе уйрӑмах тимлӗх кирлӗ. Терроризм тата экстремизм кӑмӑл-туйӑмне вӗсем урлӑ сарас шухӑшлисем те пулма пултараҫҫӗ. Апла пулсан ҫамрӑксемпе тата шкул ачисемпе ку тӗлӗшпе те ӗҫлесе пыни кирлӗ.

Ҫулталӑк вӗҫлениччен вӑхӑт нумаях юлмасть. Тӑхӑр уйӑх хыҫра ӗнтӗ. Ҫулталӑка мӗнле кӑтартусемпе вӗҫлеме хатӗрленетпӗр-ха? Район администрацийӗн финанс пайӗн пуҫлӑхӗ Рената Ананьева хӑйӗн сӑмахӗнче район бюджетне кӑҫалхи тӑхӑр уйӑхра мӗнле пурнӑҫлани пирки чарӑнса тӑчӗ.

Кӑҫалхи бюджет расхутсем енӗпе 770 млн тенкӗ ытла. Ку вӑл республикипе те виҫҫӗмӗш кӑтарту. Кунтан пысӑкраххисем Шупашкарпа Патӑръел районӗсен бюджечӗсем кӑна. Ҫакӑ чылай енчен районта федерацин ҫулсене юсассипе «Хӑрушлӑхсӑр тата пахалӑхлӑ ҫул-йӗр» программипе пӑхнӑ калӑпӑшлӑ юсав ӗҫӗсене туса ирттернипе те ҫыхӑннӑ.

Кӑҫалхи тӑхӑр уйӑхра район бюджечӗ тупӑшсем енӗпе 545 млн ытла тенкӗне танлашнӑ, расхутсем 542 млн тенкӗне яхӑн пулнӑ. Районӑн хӑйӗн тупӑш илмелли виҫи кӑҫал планпа пӗр ҫын пуҫне вӑтамран 5 пин те 900 тенкӗне танлашать. Расхутсем ҫулталӑк пӗтӗмлетӗвӗпе 22 – 23 пин тенкӗ шайӗнче пулмалла. Ҫулталӑк пуҫланнӑранпа бюджет укҫи-тенкин 54 процентне вӗренӳ сфери валли, 28 процент таран производство сфери валли уйӑрнӑ. Иртнӗ ҫулхипе танлаштарсан, культура, вӗренӳ сферисем валли укҫа-тенкӗ уйӑрасси 15 – 24 процент ӳснӗ. Район хӑй тупӑш илессин шайӗ 16 процент пысӑкрах.

Ростислав Тимофеев вара налукпа ҫыхӑнман тупӑш илессипе ҫителӗксӗр ӗҫленине палӑртрӗ. Ҫакӑ та районӑн хӑйӗн тупӑшне ӳстерет. Ҫак вӑхӑта ҫитсе те ҫӗр хутшӑнӑвӗсене кирлӗ пек йӗркелесе ҫитерес тесе вырӑнтан тапранман ял тӑрӑхӗсем те пур-ха. 7 пин гектара яхӑн лаптӑк ҫинче хальхи вӑхӑтра ҫӗр ӗҫӗсене саккунсӑр майпа туса ирттереҫҫӗ. Ял хуҫалӑх ҫӗрӗсен кашни гектарӗ вара вырӑнти бюджета тупӑш пама тивӗҫ.

Общество канашӗн членӗсем ларура татах тепӗр ыйту та сӳтсе яврӗҫ. Ҫынсен сывлӑхне тӗрӗслес енӗпе районта диспансеризаци мӗнле пыни тата чирлисене эмелсемпе тивӗҫтересси пирки Муркаш район тӗп больницин тӗп врачӗ Николай Кожевников каласа кӑтартрӗ. Николай Алексеевич ҫавна ӑнланма кирли пирки астутарчӗ: диспансеризаци тухтӑрсене мар, ҫынсене хӑйсене кирлӗ. Ҫавӑнпа та вӑхӑтра медицина тӗрӗслевӗ, диспансеризаци тухасси е тухас марри пирки сӑмах та пулма пултараймасть. Маларах тупса палӑртнӑ чире сиплеме те ансатрах. Сывӑ пурнӑҫ йӗрки вара пуриншӗн те пурнӑҫ норми пулса тӑма тивӗҫ.

**В. ШАПОШНИКОВ.**

Профилактика кунӗ

# Ача нимрен те хаклӑраххине ӑнланмаҫҫӗ

«Юнкӑ ял тӑрӑхӗнчи профилактика субъекчӗсем хушшинче ҫыхӑну пуррине курмарӑм. Реабилитаци карттисен те тулли витӗмӗ палӑрмасть», – ҫапла палӑртрӗ район администрацийӗн пуҫлӑхӗ Ростислав Тимофеев Юнкӑри профилактика кунӗн пӗтӗмлетӗвӗнче.

Чӑнах та, ял тӑрӑхӗнчи профилактика субъекчӗсем хӑйсене уйрӑммӑн пурте палӑртса хунӑ ӗҫе пурнӑҫласа пыраҫҫӗ. Йывӑр лару-тӑрулла ҫемьесене тимлӗх уйӑрни пирки вӗсем тӗслӗхсемпе ҫирӗплетсе каларӗҫ. Анчах вырӑнта пӗрле ҫыхӑнса ӗҫлени ҫук.

Ҫул ҫитменнисемпе ӗҫлекен тата вӗсен прависене хӳтӗлекен районти комиссин ӗҫне йӗркелесе пыракан секторӑн специалисчӗ Алина Колесникова профилактика ушкӑнӗ ҫав кун ҫитнӗ кашни ҫемьери лару-тӑрӑва кӗске характеристика пачӗ. Хӑш-пӗр ҫемьере ырӑ улшӑнусем пур пулсан, ытларахӑшӗнче лару-тӑру малтанхи пекех ҫивӗч.

Ҫапла ку ял тӑрӑхӗнчи пӗр хӗрарӑм, икӗ ача амӑшӗ, ялта пурӑнас килменнипе сӑлтавласа, ачисене пӑрахса хӑварнӑ та хулана тухса тарнӑ. Килте арҫын пӗчченехчӗ, выльӑхсемпе аппаланатчӗ. Ӗне, сурӑхсем тытать. Ачисем шкулта тата садикра. Пӳртре тирпейлӗ. Хӗех ачисене ҫуса тӑхӑнтартать, апат пӗҫерсе ҫитерет. Арҫын каланӑ тӑрӑх, ачасен амӑшӗ нумаях пулмасть пӗр кунлӑх килсе кайнӑ, унччен вара сентябрӗн 1-мӗшӗнчен виҫӗ кун пурӑнса кайнӑ. «Не хочу в деревне жить» текен хӗрарӑм ачисене ялтах пурӑнтарать, хӑйне кансӗрлеме памасть. Ҫавӑнпах ӗнтӗ йӗркене пӑснӑ фактсемпе те Шупашкарта полицейскисен куҫӗ тӗлне пулнӑ. Ӑна суд тенкелӗ кӗтет. Апла пулсан ачисен шӑпи те уҫӑмлӑ мар.

Йывӑр лару-тӑрулла ҫемьесен йышӗнче пӳрте кӑмака хутса ӑшӑтакансем те пур Юнкӑ тӑрӑхӗнче. Кун пеккисем уйрӑмах пӑшӑрхантараҫҫӗ. Амӑшӗсем эрехпе туслине пула пӗчӗк ачасен хӗллехи вӑхӑтра сивӗ пӳртре ларасси те пулма пултарать. Акӑ пӗр хӗрарӑм, ачисене пӗччен ӳстерекенскер, вуттине ҫитес вӑхӑтра илсе килессине, кӑмакине те ҫӗнӗрен тӑвассине пӗлтерчӗ. Ку ӗҫ тӑсӑлса кайсан вара кӑмакасӑр хӗл каҫасси те пулӗ. Пӳрт умӗнчи сак ҫинче эпир ҫитнӗ чухне ӳсӗр арҫын «канса» выртатчӗ. Профилактика субъекчӗсем каланӑ тӑрӑх, килте ҫакӑн пек «канса» выртакансем тӑтӑшах пулнӑран ачисем кукамӑшӗ патӗнче ытларах пурӑнаҫҫӗ. Хальлӗхе хӗрарӑм килте, ҫемьере ун малтанах ачасем валли лайӑх условисем тума тӑрӑшмаллине ӑнкарсах илеймен-ха.

Тепӗр ҫемьере те лару-тӑру йывӑр. Пӗрре пӑхсан пӳрт витӗр ҫил вӗрет теме те пулать. Профилактика ушкӑнӗ пӳрте хуҫи килте пулманран кӗмерӗ паллах. Анчах унти «тирпейлӗхпе хӑтлӑх» пирки лайӑх пӗлеҫҫӗ. Кил умӗнче урамрах темӗн те пӗр сапаланса выртни те ҫакӑн пиркиех калать пулӗ: пӳртре ҫӳремелли тапочки те, теттесем те, нуски те... Ачасем урамра выляҫҫӗ те пулӗ, анчах ҫакӑнтах каяш тултарнӑ михӗ те ларать. Ял тӑрӑхӗн администрацийӗ икӗ ачаллӑ ҫемьене иртнӗ кунсенче вутӑ тиесе килсе панӑ. Урамра выртакан вутта пӑчкӑпа татса хунӑ, ҫурайман-ха. Хӗрарӑм хальхи вӑхӑтра купӑста ҫинче тимленине пӗлтерчӗ ял тӑрӑхӗн пуҫлӑхӗ Валерий Фомин.

Ача амӑшӗ пулма хатӗрленнӗ вӑхӑтра ӗҫкеленӗ хӗрарӑм патне те ҫитрӗҫ профилактика кунӗнче. Вӑл халӗ икӗ ача амӑшӗ. Йӗркеллех пурӑнма тытӑннӑ. Тепӗр ҫемьере те, амӑшӗ каланӑ тӑрӑх, хӗрӗ, ача амӑшӗ, май уйӑхӗнченпе те алла черкке тытман. «Кун пек пурӑнсан чӑнах та питӗ лайӑх», – терӗ хӗрарӑм.

Профилактика ушкӑнӗ шанчӑксӑртараххисем патне ирпе кӗнипе кӑна ҫырлахмарӗ. Практика темелле кӑна. Пӗтӗмлетӳ хыҫҫӑн, каҫ еннелле, пӗр ҫемьене тепӗр хут кӗрсе тухрӗ. Йӑнӑшман: ачасен ашшӗпе амӑшӗ профилактика кунӗ ӑнӑҫлӑ иртнине «паллӑ тума» ӗлкӗрнӗ.

Профилактика ӗҫӗ Юнкӑ тӑрӑхӗнче чӑнах та пысӑк тимлӗх ыйтать. Акӑ инҫетри ялтан ашшӗн хӑрасах тӑватӑ ачине велосипед ҫине лартса садика леҫнипе те ыйтӑва татса памаллах, мӗншӗн тесен вӗсем кашни кун М7 трасса ҫине тухаҫҫӗ. Ку вара чӑнах та хӑрушӑ.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

Сывлӑх сыхлавӗ

# Туберкулез – сипленекен чир

Темиҫе ҫулах ӗнтӗ пирӗн районта пуҫласа туберкулез чирне тупса палӑртнӑ тӗслӗхсен шучӗ сахал мар, кӑҫал та вӑл ку таранччен тапхӑрта 26-па танлашрӗ. Вӗсемсӗр пуҫне маларах чирленисем те пур паллах.

Ҫапах та палӑртса хӑвармалла, туберкулеза асӑрхаттарас тӗллевпе ҫултайлӑкра пӗр хут флюорографи тӗрӗслевне тухас йӗркене пӑхӑнакансем, нумайӑшӗ мар пулин те, пур. Медицина кӑтартӑвӗсене пула ҫултайлӑкра ҫак тӗрӗслеве икӗ хутчен тӑма тивӗҫ ҫынсен ушкӑнӗ пур.

Флюорографи аслӑ ӑрури ҫынсенне чир тупса палӑртмалли чи ансат, ҫав вӑхӑтрах эффективлӑ меслет шутланать. Ачасене Манту реакцине е диаскин-тест туса тӗрӗслеҫҫӗ.

Туберкулезпа чирлекенсем сиплеве врач хушнӑ пек пурнӑҫласа пырсан юсанаҫҫӗ, анчах та эпир ҫулсеренех врач сӗннине пурнӑҫламасӑр чире шала кӗртсе пыракансем пуррине те асӑрхатпӑр. Хӑшӗсем стационартан та тухса тараҫҫӗ, амбулатори тапхӑрӗнче сипленмеҫҫӗ, эрех ӗҫсе пурӑнаҫҫӗ. Ҫакӑн пек ҫынсене пула ачасемпе ҫамрӑксене те чир ерет, мӗншӗн тесен ӳснӗ вӑхӑтра вӗсен иммунитечӗ ҫирӗп мар. Ҫавӑнпа та ҫак чире хирӗҫ кӗрешме вӗсен организмӗн вӑй ҫитмест. Пирӗн районта та туберкулезпа чирлекен ачасемпе ҫамрӑксем пур. Вӗсене пурне те тӗрӗслев витӗр кӑларнӑ, ҫийӗнчех сиплев палӑртнӑ.

Чире сараканӗ – чирлӗ ҫын, анчах та пур службӑран та (сывлӑх сыхлавӗ, полици тата ыт.те) тарса сипленмесӗр ҫӳрекенсене пула чир татах сарӑлса пырать. Ҫавӑнпа та эпир, медицина ӗҫченӗсем, кун пек ҫынсене сиплеме хистемелли ыйтупа прокуратурӑна та тухрӑмӑр ӗнтӗ.

Тепӗр хут аса илтеретӗп, туберкулез чирне, вӑхӑтра тупса палӑртсан, вӑхӑтра сиплесен, сиплеме май пур. Ҫавӑнпа та флюорографи тӗрӗслевне кашни ҫулах тухмалла. Харпӑр хӑй сывлӑхне хаклӑр. Ҫирӗп сывлӑхлӑ пулӑр.

**О. МИХАЙЛОВА,**
**фтизиатр врач.**

Тыр-пул уявĕ иртрĕ

# Ĕçĕ те, ĕçченĕ те куç умĕнче



**Чкалов яч. хис. хуçалăхăн тĕп бухгалтерĕпе В. Егоровапа И. Скворцов ертсе пыракан хресчен (фермер) хуçалăхĕн тракторист-машинисчĕ А. Таньков район администрацийĕн Хисеп грамотине район ертӳçисенчен тивĕçрĕç.**



**ЧР хăй тĕллĕн çӳрекен машинăсемпе ытти техникăна пăхса тăракан патшалăх инспекцийĕн ертӳçин Тав çырăвне Суворов яч. хис. хуçалăхри А. Лопатин механизатор тивĕçрĕ.**



**«Çичĕ хут тар тăкса пĕçернĕ çăкăра алăра тытма та хавас», – терĕ уяв сцени çинчен ансан Çурлатринчи ял клубĕн ертӳçи Лариса Аксендарова.**

**(Вĕçĕ. Пусл. 1-мĕш стр)**

Тыр-пул уявне район пуçлăхĕ – депутатсен район Пухăвĕн председателĕ Игорь Николаев уçрĕ, тухăçлă ĕçленĕшĕн пурне те тав турĕ, умри чикĕсене палăртса муркашсем вĕсене те çĕнессе шанни пирки пĕлтерчĕ:

